***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2023/2024 учебный год. 7 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, хушаматне туллин çырăр. Текста ят парăр.

(1)*Атте-анне чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе.* (2)*Тăван сăмах, тăван чĕлхе – халăх чунĕ.* (3)*Унăн паянхи кунĕ, малашлăхĕ.* (4)*Унсăрăн халăх çук.* (5)*Пулас ăрăва тĕрĕс пăхса çитĕнтересси чи малтанах тăван чĕлхе хисепĕнчен, чысĕнчен килет.* (6)*Шкулта тăван чĕлхе – пĕрремĕш предмет.*

2. Синонимсем текстăн хăш предложенийĕнче тĕл пулаççĕ? Синонимсене пуçламăш формăра çырса парăр, вырăсла куçарăр.

3. *Малашлăхĕ* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. *Йĕплĕ çăмах хыптар, йĕплĕ чĕлхе, йĕп пул, йĕпрен пĕрене ту, йĕп çăрти тăршшĕ* фразеологизмсем мĕне пĕлтереççĕ?

5. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

*Аппа <u>ылтăн</u> çĕрĕ тăхăннă.*
*Унтанпа <u>нумай</u> вăхăт иртрĕ.*
*Вăрмана <u>иккĕн</u> кайрăмăр.*
*Коля Петьăран <u>кăшт</u> лутрарах.*
*<u>Ыран</u> Мускава каятăп.*

6. Çемен Элкер çуралса ӳснĕ Кушлавăш тăрăхне миçе ял кĕрет? Элкер хăш ялта çуралнă?

7. К.В. Ивановăн «Нарспи» поэминчи тупмалли юмах тĕслĕхне илсе парăр, тупсăмне тупăр.

8. Этеме мĕнпе амантма, ӳкерме, ӳксен çĕклеме пулать? Çак шухăш мĕнле поэтăн хăш сăввинче ӳкерĕннĕ?

9. Çеçпĕл Мишшин «Хурăç шанчăк» сăввинчи çаврана вĕçлĕр. Мĕнле сăвă виçипе çырнине палăртăр.

*Çĕр-шывăм хĕвеллĕн çуталĕ,*
*Тапранĕ кăвар кайăкла.*
*Кам хирĕç килаçĕ, – улталĕ,*
………………………..

10. „Кам вăл чăн-чăн юлташ?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.



© 2023 ГАОУ «Республиканский олимпиадный центр»
Копирование **не допускается**

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2023/2024 учебный год. 8 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

1. Çак йĕркесен авторĕн ятне, хушаматне туллин çырăр. Текста ят парăр.

(1)*Пирĕн, чăвашсен, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ мул-тавар пур.* (2)*Çав çитмĕл те çичĕ тĕслĕ мулран чи пахи – асатте-асаннесем, атте-аннемĕрсем пире управлăха та усравлăха пехиллесе парса хăварнă чĕлхемĕр-тĕр.* (3)*Ĕнтĕ мана хуть те мĕн калăр та, халăхăмăра пин-пин çул пĕр çыхăра тытса тăракан сăваплă кăшăл вăл – пирĕн чĕлхемĕр!* (4)*Тымарĕсем тарăн пирĕн чĕлхемĕрĕн, вулли парка, тăрри лаштра.* (5)*Çуллен турат çумне турат хушса пырать вăл, турачĕсерен çитмĕл те çичĕ çулçă çурать, çеçке сарать, çимĕç парать.* (6)*Çав çимĕç пире чĕрĕлĕх парса тăрать.*

2. Текстра вăйлă формăри паллă ятне (ячĕсене) тупăр. Унтан текстра ытти паллă ячĕсене тупăр та вăйлă формăра çырăр.

3. *Халăхăмăра* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. *Чараксăр чĕлхе, пĕр чĕлхе туп, чĕлхе вылят, чĕлхе салтăн, чĕлхе çыхлан* фразеологизмсем мĕне пĕлтереççĕ?

5. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

*Тимĕр витре туянтăм.*
*Чылай вăхăт иртрĕ унтанпа.*
*Пĕччен нимех те тăваймăн.*
*Эпĕ ăна юри каларăм.*
*Вара кинона кайăпăр.*

6. Çак йĕркесем мĕнле хайлавран? Сăвă ятне, авторĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, псевдонимне çырăр.

*Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,*
*Çĕр-шывăн хастар ачисем.*
*Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,*
*Ан юлăр кун-çул уттинчен.*

7. Мĕн вăл пуçтай?

8. Тĕрĕк халăхĕсен паттăрла эпосĕсене каласа тухăр (5-рен кая мар).

9. Геннадий Айхин «Хамăн» сăввин çаврине вĕçлĕр:

*Мухтав турра: хăть каçару*
*Ыйтмастăп – пурăннишĕн!*
*Ман тавăру та – тавăру*
*………………………………*

а) хама çеç – хам пулнишĕн;
ă) хама çеç – тавăрнишĕн;
б) хама усал суннишĕн.

10. „Кам вăл чăн-чăн юлташ?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.



© 2023 ГАОУ «Республиканский олимпиадный центр»
Копирование **не допускается**

участнику олимпиады
для экспресс-проверки качества печати комплекта убедитесь, что на данном листе: - печать выполнено равномерно/текст четкий и легкочитаемый/ защитные знаки видны и не затрудняют чтение/



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2023/2024 учебный год. 9 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, хушаматне (е псевдонимĕ пулсан – псевдонимне) туллин çырăр. Текста ят парăр.

(1)*Чĕлхемĕр черчен те чипер, пуян та янăравлă тееетпĕр.* (2)*Анчах тус-тантăша вăлтма, атте-аннене пуçтай калама, туйра айташ выляма, кĕрекере «Алран кайми» юрлама, керемре сăвап тума пĕлетпĕр-и-ха?* (3) *Çак эткерлĕхе ăша хывăпăр, вара чĕлхемĕр хăватне эпир те тӳрре кăларăпăр.*

2. Маларах панă текстран паллă ячĕсене çырса илĕр, унтан вĕсене вăйлă виçере çырăр.

3. 1-мĕш предложенири глагола тĕрĕс çырнă-и? Хăвăр шухăша ĕнентерĕр.

4. *Чуна ил, чуна кантар*, *чуна çĕкле*, *чуна уçса яр*, *чун уççи* фразеологизмсем мĕне пĕлтереççĕ?

5. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

*Урлă сăмах каласа çынна ан кӳрентер.*

*Эпĕ тата вуларăм.*

*Такам кĕрсе тухса кайрĕ.*

*Пĕччен ĕçлесен ĕç ӳсĕнмест.*

*Хулана пĕрле кайрăмăр.*

6. К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине пуринчен малтан вырăсла куçарса пичетлесе кăларакanĕ кам? «Нарспине» вырăсла тата кам куçарнă?

7. Николай Шелепин «Раççей» сăввинче мĕнле междометисем черетленсе пыраççĕ?

8. Çак йĕркесен авторне, хайлав ячĕпе жанрне палăртăр.

*«О! Мĕне пĕлтереççĕ чаплă художниксен пейзажĕсем çут çанталăкра пуррипе танлаштарса пăхсан! Вĕсем ӳкернинче питĕ ăста евĕрлеме пĕлни кăна тĕлĕнтерет, урăх нимĕн те тупаймастăн. Кунта пачах урăхла, чун-чĕре каласа ăнлантарма çук киленĕçпе ирĕлет, юлашкинчен вара çут çанталăкăн темĕнле курăнми вăйĕнчен тĕлĕннипе çухалсах каятăн».*

9. П. Хусанкайăн Наталийĕ хăйĕн тĕррине мĕнле тĕссемпе тĕрлет?

10. „Кам вăл чăн-чăн юлташ?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.



© 2023 ГАОУ «Республиканский олимпиадный центр»
Копирование **не допускается**

участнику олимпиады
для экспресс-проверки качества печати комплекта убедитесь, что на данном листе: - печать выполнено равномерно/текст четкий и легкочитаемый/ защитные знаки видны и не затрудняют чтение/



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2023/2024 учебный год. 10 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, хушаматне (е псевдонимне) туллин çырăр. Текста ят парăр.

(1)*Тăван чĕлхе вăл халăхăн сăвапллă та чи таса, чи хаклă пурлăхĕ.* (2)*Тăван чĕлхе – тĕнче ăс-хакăлĕ.* (3)*Калама çук пуян, ытарайми хитре вăл пирĕн тăван чĕлхемĕр.* (4) *Чăваш чĕлхипе кирек мĕнле туйăма та, тем тĕрлĕ пысăк шухăша та сар кайăк юрри пек, шăнкăр-шăнкăр шыв юххи пек, хурăн çулçисем шĕпĕлтетни пек илемлĕн те сăнарлăн, хавхалануллăн, çĕкленӳллĕн, кирлех пулсан ытарлăн та каласа кăтартма пулать.*

2. Текстра кайăк ячĕ тупăр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран евĕрлев сăмахне (сăмахĕсене) тата евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă сăмаха (сăмахсене) çырса илĕр.

4. *Ăша хыв, ăша яр, ăш вăркать, ăшша пиç, ăш-чик вĕреме тытăн* фразеологизмсем мĕне пĕлтереççĕ?

5. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

*<u>Анчах</u> кунтаччĕ вăл, таçта çухалчĕ.*
*Вăл <u>тата</u> юрларĕ.*
*Килте никам та <u>çук.</u>*
*<u>Тем</u> çинчен те калаçрăмăр.*
*Ăшăрах тăхăнăр, <u>атту</u> чирлетĕр.*

6. Çак йĕркесен авторĕ кам?

«*Пуçласа тăвакан ĕç нумай чухне кăлтăксăр пулмасть, анчах кунта нимĕн те хăрушши çук: каярахпа вĕсене тӳрлетме йывăрах пулмĕ. Çапла сунасси çеç юлать: çак ĕçре тата ăна пула эпир ăслă çынсене тивĕçлĕ пахалăх шайне çитер*».

7. Спиридон Михайловăн «Чăваш халапĕсенче» Янтуш сăнарĕ пур. Вилсен Янтуша миçе лаша кӳлнĕ çунапа турттарса кайнă?

8. И.Я. Яковлевăн «Манăн пурнăç» аса илӳсен сыпăкĕсенче çывăх тăванĕсем çинчен калани чылай. Иван Яковлевичăн амăшĕ тата асламăшĕ мĕн ятлă пулнă?

9. Çеçпĕл Мишшин «Юншăх» калавĕнчи тĕп герой кам? Унăн прототипне палăртăр.

10. „Кам вăл чăн-чăн юлташ?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.



© 2023 ГАОУ «Республиканский олимпиадный центр»
Копирование **не допускается**

участнику олимпиады
для экспресс-проверки качества печати комплекта убедитесь, что на данном листе: - печать выполнено равномерно/текст четкий и легкочитаемый/ защитные знаки видны и не затрудняют чтение/



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2023/2024 учебный год. 11 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, хушаматне (е псевдонимне) туллин çырăр. Текста ят парăр.

(1)*Чĕлхе – халăх пуянлăхĕ.* (2)*Тăван чĕлхене юратман çын çут тĕнчере çук та пулĕ.* (3)*Тăван чĕлхе – халăх палли, вăл вилĕмсĕррине çирĕплетекен тăмха. (3) Çавăнпа кашни халăх хăй чĕлхине ытарайми юратать, пуринчен те ытла пахаласа хисеплет, куç шăрçи пек сыхлать, чи хаклă пурлăх тесе упрать. (4)Ĕлĕкрен-авалтанпах тĕрлĕ халăхăн чи чаплă паттăрĕсем тăван чĕлхешĕн вутра çунма та, шывра путма та, чĕрĕллех çĕре кĕме те хатĕр пулнă; тĕрлĕ халăхăн ăслă ывăл-хĕрĕсем тăван чĕлхене юрă сăвăсенче юрланă, унран хакли çуккине çирĕплетсе каланă.*

2. *Тăмха* сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарăр, вырăсла куçарăр.

3. *Вилĕмсĕррине* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. *Пĕр каварлă пул, пĕр калăппа виç, пĕрре сурмалăх кăна, пĕр çăвартан сур, пĕр хĕлхем* фразеологизмсем мĕне пĕлтерессĕ?

5. Паллă тунă сăмахсем мĕнле пуплев пайĕ пулаççĕ?

*<u>Çук</u> çын çукшăн кулянать.*
*Халĕ виçĕ сехет <u>кăна.</u>*
*Пирĕн çурт шкулпа <u>юнашар</u> вырнаçнă.*
*Ил <u>тата</u>, мĕн илместĕн?*
*Эпир <u>урлă</u> урамра пурăнатпăр.*

6. Çак йĕркесен авторĕ кам?

*… Ырă пахалăх чăвашсен нумай, вĕсем – пилĕксĕр сăхман тăхăннинче, çăпата сырнинче, серте яшки çининче мар – шалта, ăшра. Вĕсене, мĕн пур ăш-чике, ăс-тăна шăранса ларнăскерсене, уйăрса илме, каласа пама йывăр, вĕсене куçпа курни çитмест – çивĕч сисĕмпе туйса илмелле.*

7. Митта Ваçлейĕн 4 картлă анапест виçипе çырнă сăвă йĕркине аса илĕр. Схемăласа кăтартăр.

8. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăрĕнчи» тĕне кĕмен авалхи арçын ячĕсене (10-ран кая мар) çырса тухăр.

9. Тутар Республикин Теччĕ районĕн Кăнна Кушки ялĕнче çуралса ӳснĕ илемлĕ сăмах ăстисене аса илĕр.

10. „Кам вăл чăн-чăн юлташ?“ темăна уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар хайлав çырăр.



© 2023 ГАОУ «Республиканский олимпиадный центр»
Копирование **не допускается**